# МУРКАШ РАЙОНĔ – 75 ÇУЛ:

*Проект Чăваш Республикин Цифра аталанăвĕпе информаци политикин*

## Мĕн пуррине упраса малалла пăхатпăр

**Пирĕн районăн çурçĕр-хĕвеланăç пайĕнче вырнаçнă хуçалăхсенчен пĕри вăл – Суворов ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх производство кооперативĕ. Лаптăкĕ те пĕчĕк мар унăн. Сухаламалли çĕрсен лаптăкĕ çеç пĕтĕмĕшле 4500 гектара яхăн йышăнать. Вăл асăннă хуçалăха тулли хăватпа ĕçлеме тата малашлăха пăхса аталанма май парать. Ыранхи кунпа, мал ĕмĕтпе пурăнакан анаткассисем хуçалăхри чылай ĕçе паянхи куна механизациленĕ ĕнтĕ. Çавăнпа та уй-хирти, фермăри ĕçсен ытларах пайне вĕсем техника пулăшнипе пурнăçлаççĕ, аталанăвăн çĕнĕ чиккисене палăртаççĕ.**

Хăй вăхăтĕнче ырă малашлăха шанса-кĕтсе ача-пăчана пĕр пус хурса виçĕ пус илме вĕрентменнишĕн паян кулянакан чылай. Анчах пăшăрханнипех пĕве пĕвеленмест: мĕн çуккине тумалла-туянмалла, киввине çĕнетмелле, пĕлменнине вĕренмелле, çĕннине алла илмелле. Районти тĕрлĕ харпăрлăх формиллĕ пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче пулса курнă май, хăшĕсем йывăрлăхсем умĕнче пуç усманнине, малашлăха пăхса, ыррине шанса ĕçленине куратăн та, вĕсен ĕçĕпе район пурнăçĕ малалла утăмланине асăрхатăн. Кунпа пĕрлех унта ĕçлекенсем çĕнĕ технологисене пурнăçа кĕртме пултарнишĕн савăнатăн, шанчăк çуратса ыранхи куна çирĕпрех пăхатăн, çĕнĕ ĕмĕтсем тĕвĕлетĕн. «Йывăр, йывăр», – тетпĕр те, анчах çанă тавăрса ĕçлеме пултарсан тата çĕнĕлĕхсенчен ютшăнмасăр вăй хурсан, пурăнатпăрах иккен. Çитменнине япăхах та мар. Ăна тума алă усмалла мар çеç. Çакна валли пирĕн вăй-хал çителĕклĕ. Ку тĕрĕслĕхе Турай ял тăрăхĕнчи Суворов ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх производство кооперативĕнче пулсан кашнинчех асăрхатăн. Çакна уй-хирпе выльăх-чĕрлĕх отраслĕсем, машинăпа трактор паркĕ аталанни, техникăна упрасси тата мĕн пуррипе туллин усă курасси çĕнĕ шая çĕкленни çирĕплетет.

– Паянхи пурнăçра çуккишĕн макăрнипе кĕсьене укçа кĕмест. Эпир хамăр хуçалăхра çак чăнлăха тĕпе хурса ĕçлетпĕр. Производство тата техника енчен çĕнĕлĕхсене тăтăш çул паратпăр, перекетлĕхе малта тытатпăр. Хуçалăх ĕçченĕсемпе туна килĕшӳсене вăйра тытса пыма тăрăшатпăр. Пурсăмăр та пĕр шухăшлă пулни ума лартнă тĕллевсене пурнăçлама пулăшать, татах çĕнĕ тĕллевсем çуратать. Çавна та каламалла, ырă ятлă тата малтисен йышĕнче пулма çăмăл мар. Анчах эпир мĕн тунипе çеç çырлахас теместпĕр, аталанăвăн çĕнĕ чиккисене çĕнессипе тăрăшатпăр, – каласа парать кооператив ертӳçи Алексей Воробьев.

### ИСТОРИ

90 çул каялла çĕр ĕçченĕсем хуçалăхсене пĕрлешсе ĕçлеме пуçланă. Хальхи Суворов ячĕпе хисепленекен пĕрлешӳллĕ хуçалăх çĕрĕ çинче пуçламăш тапхăрта 4 хуçалăх пулнă. Вĕсем: Çатракасси ялĕнче – «Хлебороб», Кĕçĕн Чурашра – «Броневик», Анаткассинче – «Октябрь», Тушкассинче – Володарский яч. хис. хуçалăх.

Анаткассинчи колхоз 1930 çулхи январĕн 10 – 13-мĕшĕсенче 10 – 12 хресчен çемйи пĕрле ĕçлеме кăмăл тунинчен тымарланать.

Ĕçлекен малаллах пăхать. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи вăхăтĕнчи йывăрлăхсене чăтса ирттерсен, 1950 çулхи июль уйăхĕнче пĕчĕк колхозсене пĕрлештерсе, Суворов ячĕпе хисепленекен пысăк хуçалăх туса хураççĕ. Мал туртăмлă ĕçлесе асăннă колхоз кĕçех ăратлă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетме, тырă-пулăн элитăллă вăрлăхне туса илме пуçлать. Пĕрлешӳллĕ хуçалăх территорийĕнчи ялсене те çĕнĕ сăн кĕрет.

Çĕршывра рынок экономики ĕçлеме пуçласан, хуçалăх пĕр хушă йывăрлăха кĕрсе ӳкет. Кун пирки ял хуçалăх производство кооперативне 2004 çулта ертсе пыма пуçланă В. Андреев çапла аса илет:

– Хам çуралса ӳснĕ тăрăхра ĕçлекенсем йывăрлăх умĕнче хуçалăх тилхепине хама шанса парсан, эпĕ çăмăл пуласса кĕтмен те. Çакна хама председателе суйлакансене те тӳррĕн каларăм: пĕрле суйларăр пулсан, пĕрлех тӳссе ирттермелле пулать.

### ÇĔНĔ ТАПХĂР

2004 çулхи утă уйăхĕн 20-мĕшĕ. Владимир Славич ĕçе пикеннĕ кун гаражра çум çитĕнетчĕ, выльăхсем патĕнче апат çителĕксĕрччĕ, техникăна ĕçе кăларма сĕрмелли-çунтармалли материал çукпа пĕрехчĕ. Çакнашкал лару-тăрура Етĕрне районĕнчи кӳршĕллĕ «Герой» хуçалăха алă тăсса кайнине 12 çул хуçалăха «лачакаран» кăларассипе вăй хунă председатель паян та çăмăллăн аса илеймест. Анчах ку вăл пуçламăшĕ кăна пулнă-ха.

– Вăл вăхăтра хуçалăхра ĕни те, вăкăрĕ те, сысни те, пăрăвĕ те пурччĕ. Пĕрремĕш вырмари тырă-пулă вĕсемшĕн кăртăнкăрах пулчĕ. Çавăнпа та февральтех тырă ширама тухрăмăр. Чулхула облаçĕнчи пĕр хуçалăх тырă сутать тенине илтнипе пĕр шăматкун унти «Власть Советов» колхоза çул тытрăм. Председательпе тĕл пулса калаçса пĕр КамАЗ урпа илсе килтĕм. Вăл пĕр эрне пурăнма çеç çитрĕ. Каллех пулăшу ыйтрăм. Пулăшу пулчĕ. Ку тырă та пĕтсен, тырăн пысăкрах партине килĕшӳ туса илме шутларăм. Ĕмĕт пурнăçланчĕ. Ун хыççăн Перекет банкĕнчен кредит илнипе те тырă туянма тиврĕ. Апат пуррине кура производство малалла утăмланăран, 2007 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен ĕç укçине ӳстертĕмĕр, ăна çĕнĕлле тӳлесси çине куçрăмăр, – аса илет В. Андреев.

Ырă сăмахсем ĕçлемесĕр çуралмаççĕ. Хыççăнхи çулсенче хуçалăх наци проекчĕпе кредит илсе виçĕ Т – 150, виçĕ дискатор туянать. Пĕрлехи тăрăшулăхпа тата хуçалăх вăйĕпе ĕне тата сысна фермисенче пĕр миллион та 700 пин тенкĕлĕх юсав ĕçĕсем пурнăçлать. Çĕнĕ тапхăрта сысна фермине вентилятор вырнаçтараççĕ, сĕт ферминче – танк-охладитель.

– Малтанхи вăхăтра сĕт йӳссе кайнă тĕслĕхсем те пулнă пулсан, танк-охладитель туяннă хыççăн пахалăхлă сĕт çеç сутма пуçларăмăр. Ку та хуçалăх кассине хушма укçа-тенкĕ кĕртме пулăшрĕ. Ферма ĕçченĕсем те тăрăшарах ĕçлеме пуçларĕç, – каласа парать хуçалăхăн тĕп зоотехникĕ Г. Васильева.

### ПРОИЗВОДСТВО

Суворов яч. хис. хуçалăх ăратлă ĕне выльăх ĕрчетессипе специализациленет. Çак отрасле аталантарса кооператив ĕçченĕсем иртнĕ çул сумалли ĕнесен кĕтĕвне 23 пуç ӳстерсе 247 ĕнене çитернĕ. Машинăпа сăвакан операторсем пĕлтĕр кашни ĕне пуçне вăтамран 7006 килограмм сĕт суса илни – виçĕм çулхи кăтартуран 542 килограмм пысăкрах. Палăртмалла, 2004 çулта çак кăтарту 2601 килогрампа çеç танлашнă. Юлашки çулсенче сăвăма ӳстерме хуçалăхра никĕс те çирĕпленнĕ. Хăй вăхăтĕнче тырă ширанă хуçалăх юлашки 3 çул хушшинче тырă-пулă тухăçне гектар пуçне вăтамран 29 центнертан чакарман, уттине те, сенажне те витлă-çитлех янтăланă. В. Андреев ертсе пыма пуçланă çул хуçалăх 9 миллион та 250 пин тенкĕ ĕçлесе илнĕ, анчах парăм 13 миллионпа танлашнă. Иртнĕ çул пĕтĕмпе 61 миллион тенкĕлĕх продукци реализациленĕ пулсан, таса тупăш 6,9 миллион тенкĕпе танлашнă.

– В. Андреев хуçалăха сыхласа хăварса çĕнĕ шая çĕклени – кашнин куçĕ умĕнче, – терĕ Владимир Славич кандидатурине районăн Хисеп кĕнекине кĕртме сĕнсе районăн Хисеплĕ гражданинĕ Валериан Краснов.

### ĂМĂРТСА ĔÇЛЕÇÇĔ

Хуçалăх экономикине çĕнĕлĕхсем кĕртнĕ хыççăн вырăнти механизаторсемпе водительсем тата юсавçăсем ĕç çине çĕнĕлле пăхма пуçланă. «Хуçалăхра техникăпа ĕçлессине, механизаторсемпе водительсен тăрăшулăхне хуçалăхăн тĕп инженерĕ Иван Васильев йĕркелесе пырать. Вĕсем кирек хăш ĕçре те пĕр çын пек пулса вăй хуни хуçалăх экономикине перекет сулĕпе илсе пыма май парать», – терĕ кооператив ертӳçи Алексей Воробьев тракторпа машина паркне ĕçĕпе паллаштарнă май. Парка пырса кĕрсен, унта кашни утăмрах тирпейлĕх хуçаланни, техникăпа перекетлĕ усă курма тăрăшни, хуçала ĕçлессине тĕп вырăнта тытни куç умне пулчĕ.

– Эпир ыранхи кунпа пурăнатпăр. Çавăнпа та мĕн тунипе самантлăха та лăпланма шухăш çук. Ку ырă ене аслă ăрурисенчен алла илтĕмĕр те малалла тăсатпăр. Çак çулпа пынăран хамăрăн аталану чиккисене те курмастпăр. Тĕллевĕ ĕçленĕрен пĕр вырăнта тăрассинчен иртрĕмĕр, – терĕ тĕп инженер Иван Васильев хуçалăхăн машинăпа трактор паркĕпе паллаштарма пуçланă май.

Хуçалăх производствăна ӳстернипе пĕрлех юлашки çулсенче ял хуçалăх техникине упрас ыйтупа та палăрăмлă утăм турĕ. Çакна каласа хăвармалла, хуçалăх инженерĕпе механизаторсем пĕр тĕллевлĕ пулнăран, пысăк укçа тӳлесе илмелли техникăна хуçалăхрах ăсталама пуçларĕç. Çавăнпа та хуçалăхри механизаторсем Иван Вадимович тĕп инженерта ĕçлеме пуçланăран машинăпа трактор паркне те çĕнĕ сăн кĕнине, вырăнти вăйпах техника паркĕ самай çĕнелнине çирĕплетрĕç.

Механизаторсем каланине çак тĕслĕхсемпе çирĕплетме пулать. Хуçалăхра çĕнетсе ăсталанă культиваторсем, хăватлă сӳре агрегачĕсем, çуркунне минераллă удобрени сапмалли агрегат т. ыт. те кун çути курнă. Вĕсене вырăнта ăсталаса пурнăç пани хуçалăхшăн перекет сулĕ çеç пулса тăрать. Сăмах ку тĕле çитсен Иван Вадимович пĕтĕм ырă ĕçе хăйĕн çине çеç илессинчен пăрăнчĕ:

– Çак ĕçсене эпĕ пĕччен тумастăп. Хуçалăх ертӳçи хавхалантарнипе, трактористсемпе юсавçăсем пĕрле тата пуçарулă пулнипе çĕнĕлĕхсене алла илме тăрăшатпăр. Сӳре агрегатне пуçтарнă çĕрте те, культиваторсене те хатĕр чертежсемпе майлаштарса пычĕç. Çуркунне иртерех удобрени сапма тухмалли агрегата заводран миллион ытла тенкĕ тӳлесе илмелле пулсан, эпир ăна çур хакпа ĕçе хатĕрлесе çитертĕмĕр. Хамăр техникăпа удобрени сапасси те аякран килсе ĕçлекенсенчен йӳнĕрех ларчĕ, – паллаштарать И. Васильев кашни механизаторăн тӳпине уйрăммăн палăртса.

Техника паркне çĕнетессине те хуçалăх хăй еккипе яман. Акă пĕлтĕр çеç анаткассисем çĕнĕрен «Кировец – 744» трактор тата ăна валли 3 культиватор туяннă. Утă пуçтарса преслamalli 2 пресс-подборщик туянни те хуçалăхăн ĕç мелĕсене ӳстернĕ çеç. Паян хуçалăхра «симĕс ĕç çи» пынă хушăрах механизаторсемпе юсавçăсем çывхаракан вырма пирки те шутлаççĕ. Хатĕрленӳ ĕçĕсене пуçăнса саппас пайсем туяннă та ĕнтĕ. Ку ĕç малалла пырать.



Эсир паянхи сăн ӳкерчĕкре Суворов яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕн ăста механизаторне Юрий Орлова куратăр. Хуçалăхра пĕр йышши техникăпа ĕçленипе çеç лăпланса лармасть вăл. «Эпир пĕр техникăпа кăна ĕçлесси хыçала юлнă пулăм. Ирхине машинăпа трактор паркне çитсен мĕнле ĕç тупăнать – нихăшшин умĕнче те пуç усмастпăр», – терĕ трактор кабинине кĕрсе ларнă май Юрий Гордиянович. Вăл паян фермăри выльăхсене «Хозяин» агрегатпа апат валеçет.



Эсир сăн ӳкерчĕкре хуçалăх ферминчи ĕнесене машинăпа сăвакан операторсен ушкăнне куратăр. Вĕсем хăйсен ĕç кăтартăвĕсене çуллен ӳстерсе пыраççĕ. «Ĕçлеме условисем çителĕклĕ. Фермăри тирпейлĕхпе хăтлăх куллен ĕçе йыхравлаççĕ, ĕçлес хавхаланăва та çĕклеççĕ. Тавах çакăншăн хуçалăх ертӳçисене», – терĕç ĕнесене машинăпа сăвакан операторсем. Вĕсем (сулахайран сылтăмалла): Г. Яковлева (ĕç стажĕ 6 çул), Л. Олгашова (29 çул), Г. Алексеева (6 çул), В. Афанасьева (30 çул), Ф. Антонова (23 çул), хуçалăхăн тĕп зоотехникĕ Г. Васильева çак ĕçре 1982 çултанпа. Кашни хăйĕн ĕçне пĕлсе пурнăçланипе палăрса тăрать. Сăмах май, хуçалăхра ĕнесене талăкĕпех фермăра тытассине йĕркеленĕ.

# ИРТНИСĚР МАЛАШЛĂХ ÇУК

*тата массăллă коммуникацисен министерстви пулăшнипе пурнăçа кěрет*

## Районти пултарулăх çурчěн çулě анлă

**«Районти пултарулăх çурчě» хушма вěренěвěн муниципалитет бюджет учрежденийě хăйěн ěçне 1955 çулта Мăн Сěнтěр салинче пуçланă. Ун чухне вăл шкул ачисемпе пионерсен çурчě пулнă. 1964 çулта, Муркаш районě йěркеленнě май, асăннă учреждение Муркаша куçарнă.**

Ачасен вěренěвне тěрлě енлě йěркелес тесе ун чухне горнçăсемпе параппанçăсен, ташăçăсемпе юрăçсен, шахматистсен кружокěсене йěркеленě, çавăн пекех драма тата сăн ӳкерме вěренекенсен кружокěсем ěçлеме пуçланă.

1955 – 1959 çулсенче асăннă çурта Т. Рудова ертсе пынă. Каярах Ф. Кириллов, З. Ильмекейкина, Л. Малышев, А. Игреев, В. Скребков, Р. Колесникова ертсе пынă. 2008 çултан пуçласа 2018 çулччен А. Рожкова учреждени ěçне питех те ăнăçлă йěркелесе пынине палăртмалла. Халě пултарулăх çурчěн ертӳçинче И. Иванова тăрăшать.

1970 – 80-мěш çулсенче шкул ачисемпе пионерсен çурчě районти пионер дружинисенче ěçлессин методика центрě шайěнче вăйра тăнă. 1996 çулта асăннă çурт эпир халě пěлекен Районти ача-пăча пултарулăхěн çурчě пулса тăнă.

Халě тытăмра пултарулăхăн 51 пěрлешěвě ěçлет, вěсенче 901 ача тěрлě енлě аталанса пěлӳ илме пултарать. Вěренӳ ěçě пěтěмěшле пěлӳ паракан 19 учреждени бази çинче пурнăçланса пырать. Кулленхи ěçре ачан пултарулăхě, çемье ыйтăвě, наципе культура йăли-йěрки – яланах малти вырăнта. Вěренӳ программине туризмпа краеведени, физкультурăпа спорт, художество, çут çанталăк тата ытти енпе йěркеленě.

Районти пултарулăх çурчěн коллективě тěрлě программăпа проекта хутшăнса çěнтерӳçě йышне кěме тивěçнě. 2011 çулта республикăри «Повышение экологической безопасности в Чувашской Республике на 2010 – 2015 годы» тěллевлě программа шайěнче «Школьники Моргаушского района – в ногу с экологией» проекта вăя кěртнě. Çак программăн тата патшалăхăн «Развитие потенциала природно-сырьевых ресурсов и повышение экологической безопасности на 2014 – 2020 годы» хушма программи пурнăçланса пынă май, асăннă учреждени «Живи в гармонии с природой, мой край родной Моргаушский» проект çырса çěнтерӳçě пулнă. Учреждени Чăваш Республикин Вěренӳ министерствин 2012 çулхи 74 номерлě хушăвěпе килěшӳллěн республика шайěнчи «Ача-пăча туризмěн аталанăвě» проектăн пилот лаптăкě пулса тăрать.

2016 çулта вěренӳ учрежденийěсен республикăри инноваци программине пурнăçлассин конкурсěнче пултарулăх çурчě «Моргаушский район – край перспективного туризма» проектпа çěнтерӳçě пулса тăнă, гранта тивěçнě. Проекта вăя кěртессине пěтěмпе 2197 çын хутшăннă. 2017 çулта «Колыбельные песни земли Моргаушской» проектпа çурма финала тухнă. Кун йышши ěçсемпе çитěнӳсене татах та асăнма пулать.

Вěренӳпе воспитани парас ěçсем ăнăçлă йěркелесе пынинче учрежденин пысăк квалификациллě кадрсем тимленине палăртмалла, унта пěтěмпе хушма вěренěвěн 50 педагогě тимлет. Вěсем тăтăшах пěлӳ шайне ӳстерсе пыраççě, пултарулăх çурчěн администрацийě çакна валли ăнăçлă условисем йěркелеме тăрăшать. Пултаруллă вěренекенсем Чăваш Республикин Пуçлăхěн стипендине çулсерен йышлăн тивěçеççě, çичшер ача илни тăватă çул умлăн-хыçлăн пулнă. Çакă та пысăк ěç пулни каламасăрах паллă ěнтě.



Пултарулăх çуртěнче ача-пăчан «Союз мальчишек и девчонок» обществăлла организацине йěркеленě, ăна 2009 çулта коммерциллě мар организаци шайěнче регистрациленě.

Районта çамрăк космонавтсен Юнкă шкулěнчи «Юнга», Калайкасси шкулěнчи «Восток», Муркаш шкулěнчи «Звездный» отрядсем ачасемпе ăнăçлă ěçлеççě. 2006 çулта «Восток» отряд республикăра космонавтсен чи лайăх отрячěн ятне тивěçнě. «Юнга» отряд вара республикăра 12 хутчен чи пултарулли пулнă. «Юный биолог» пěрлешӳри ачасем çулсеренех республика тата Пěтěм Раççей шайěнчи конкурссене хутшăнаççě, призерсемпе çěнтерӳçěсен йышне кěреççě.

Раççейри шкул ачисен юхăмěн конкурсěсене те ачасем хавaспа хутшăнаççě. Конкурссене пěтěмлетнě тăрăх, Муркаш, Шурча, Çатракасси, Шетмěпуç шкулěсенчи вěренекенсем «Орленокра», «Артекра» тата «Байконурта» пулса курнă.

«Орленок» ача-пăча центрěнче ял шкулěсенчи ачасем валли «Время действовать» смена ěçленě. Иртнě çул смена çěршыври конкурс çěнтерӳçисенчен пухăннă 50 командăри 300 ачана пěрлештернě. Вăл шутра Чăваш Енри 2 ушкăн пулнă, вěсенчен пěринче пирěн районти пултарулăх çурчěн вěренекенěсем: Валерия Львова, Вероника Ерзукова, Светлана Рожкова, Екатерина Иванова, Дарья Соловьева, Анастасия Петрова.

Пултарулăх çурчě Пěтěм Раççейри «Сделаем вместе!» юхăм енěпе те, «Здоровое будущее» проектпа та ěçлесе пырать. «Сделаем вместе!» юхăм ěçне ăнăçлă йěркеленипе 2017 çулта Муркаш шкулěн пěр ачи, 2018 çулта Шомик шкулěн пěр вěренекенě «Артека» кайма тӳлевсěр путевкăна тивěçнě, кăçалхи ěçе хальлěхе пěтěмлетеймен-ха.

Пултарулăх çурчě районта чылай конкурспа ăмăрту иртерет, çавăн пекех вăл тěрлě шайри чылай Тав çырăвěпе Хисеп хутне тивěçнине те палăртмалла.

## Вěсем – спорт тусěсем



***Район территорийěнче спорт тата физкультура учрежденийěсемпе сооруженийěсем сывлăха çирěплетес текенсем валли çителěклě: «Сывлăх» спорт шкулě, 26 спортзал, 94 стадионпа площадка, 7 тир, В. Егорова ячěллě спорт шкулěн Муркашри филиалěн йěлтěр бази, хоккей курупкисем 5. Çаксем йăлтах сывлăха çирěплетме май паракан сооруженисем, вěсенче яланах çынсене хапăл туса кěтсе илеççě, кăмăл пултăр кăна.***

Районăн 1980-мěш çулти производствăпа экономика кăтартăвě тăрăх, асăннă çул пуçламăшěнче районта физкультурăн 68 коллективě пулнă, вăл шутра 31-шě шкулсенче, ытти – колхозсемпе совхозсенче, предприятисемпе учрежденисенче. Спорта юрататансем валли 11 спорт залě, 8 тир, 27 баскетбол лаптăкě, 52 волейбол лаптăкě, футболла вылямалли 31 лаптăк, хоккей лаптăкě 2, гандбол лаптăкě 21 пулнă. 1984 çулхине районти 4306 çын ГТО значокне илме тивěçнě, вăл шутра 1-мěш разрядлисем – 44-ăн, 2-мěш тата 3-мěш разрядлисем – 3872-ěн, спорт маçтăрěн кандидачě – 1.

Хальхи вăхăтра ку тěлěшпе халăх чи йышлă çӳрекен учреждени – «Сывлăх» спорт шкулě. Кунта спортăн тăхăр тěсне аталантараççě. Çакăнта аслă ăрури те, кěçěнни те хăйне валли чун киленěçě тупма, сывлăха çирěплетме пултарать.

Акă эсир сăн ӳкерчěкре куракан спортăн чăн тусěсем – Михаил Романовпа Аверкий Васильев та асăннă учреждение май пур таран тăтăш çӳреме тăрăшаççě.

– Хамăр пурнăçа спортсăр ăнланмастпăр, ăна тепěр хут пуçлас пулсан та çак çула суйланă пулăттămăр, спорт вăл – пурнăç, – теççě ветерансем хавхаланулăн.

Михаил Ананьевичпа Аверкий Васильевич ěç ěмěрне спорта аталантарассине тата çак шайра çěнěрен те çěнě ятсем туптаса кăларассине халалланă. Районăн спорт çитěнěвěсенче вěсен тӳпи чăннипех те пысăк.

Михаил Романов 1979 çулта Муркашри Спорт çурчěн ертӳçинче тата тренерта тăрăшма тытăннă. 1983 çултан вара Муркаш районěн спорт пайне ертсе пынă, çак ěçре пěтěмпе 22 çул тимленě. Çав çулсенчи спорт çитěнěвěсемпе кăтартăвěсем, ирттернě тата хутшăннă ăмăртусем йышлă пулнă. Спорт аталанăвне пысăк тӳпе хывнăшăн Михаил Романов 1996 çулта Чăваш Республикин физкультурăпа спортăн тава тивěçлě ěçченěн ятне тивěçнě. Вăл – йěлтěрпе чупас енěпе СССР спорт маçтăрě.

Аверкий Васильева спорт ěçěн аталанăвне пысăк тӳпе хывнăшăн, Пěтěм тěнче шайěнчи спорт маcтăрěсене, пысăк квлификациллě спортсменсене – Вера Соколована, Петр Трофимова, Василий Трофимова – çӳллě шая хăпарма пулăшнăшăн, çитěнӳсем тума хатěрленěшěн Чăваш Республикин тава тивěçлě тренерě ятпа чысланă. Ěç ěмěрне Чуманкасси шкулěнче ирттернě, кашни ачапа тачă ěçлеме тăрăшнă.

Паянхи кун та стройра çирěп тăракан ветерансем спортпа мěн ачаран çывăх пулнă.

– Спорта юратăр, унпа мěн ачаран туслашăр, ăна валли яланах вăхăт тупма тăрăшăр. Вăл çирěп сывлăхлă пулма, çамрăклăха упрама пулăшать, – теççě вěсем хăйсенчен тěслěх илме сěнсе.

## Район пуянлăхě – унăн çыннисем



**Район аталанăвě, паллах, унăн çыннисен тăрăшулăхěпе тачă çыхăннă, апла пулсан район пуянлăхě – унăн çыннисем.**

Сăн ӳкерчěкре район ěç-хěлне пысăк тӳпе хывнă, çамрăксемшěн тěслěхри çынсене куратăр. Светлана Алексеевнăпа Анатолий Калистратович Касьяновсем (сулахайран сылтăмалла) – Хорнуй ял тăрăхěнчен. Çемье пусě ěç ěмěрне вăрман хуçалăхěпе çыхăнтарнă, мăшăрě вара выранти Ленин ячěпе хисепленекен хуçалăхра тăрăшнă, чылай çул ферма ертӳçинче тимленě.

Касьяновсем 38 çул пěрле килěштерсе пурăнаççě, вěсем вицě ача ӳстерсе пурнăç çулě çине кăларнă, хисеплě мăшăрăн халě 7 мăнук. Касьяновсем – ял тăрăхěн активисчěсем, культурăпа спорт мероприятийěсене активлă хутшăнаççě.

Римма Петровнăпа Александр Сергеевич Волковсем – Оринин ял тăрăхěнчен. Вěсем пурнăç çулěпе 36 çул пěрле утаççě. Римма Петровна мěн тивěçлě канăва тухиччен «Оринино» хуçалăхра ěçленě. Халě вăл – Орининти ветерансен хорěн солистки. Александр Сергеевич 2011 – 2016-мěш çулсенче Оринин ял тăрăхěн пуçлăхěнче тимленě. Халě ял тăрăхěнче ВУС инспекторěнче тăрăшать.

**Кăларăма хатěрлекенсем: Р. Макарова, А. Белов, В. Шапошников, Н. Николаева.**